Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

65-66 (7807-7808) №№ ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи çурла (август) уйăхĕн 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Кунта ĕçлеме таса кăмăл кирлĕ

Ыран – Пыл спасĕ



*Хăй ĕçне чунĕпе парăннă çын яланах хитре те уçă кăмăллă. Унăн ĕçченлĕхĕнчен тĕлĕннипе пĕрлех хăйĕнпе ларса калаçсан чун çăмăлланать, ырă ĕмĕтсем çуралаççĕ, пурнăçăн малашлăх илемĕ ӳсет.*

*Муркашпа Етĕрне районĕн чиккинчи çĕршер çулхи хутăш вăрманта вăрман хуçалăхĕпе калаçса килĕшӳ туса арендăна илнĕ çĕр çинче йĕркеленнĕ утар (сăн ӳкерчĕкĕ 7-мĕш стр.) пирĕн паянхи пурнăç хĕвĕшĕвĕнчен катана илсе кĕнĕнех туйăнса кайрĕ. Ĕмĕрхи юмансем айĕнче вырнаçнă вĕлле лартмалли çурт (омшаник), утарçăсен ĕçлемелли пӳрчĕ, тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕр хумалли-упрамалли пĕчĕкçĕ ампар, йывăçсен сулхăнĕнчи алăпа тунă çăл, çумкурăкран тасатнă тавралăх, вĕллесем таврашĕнче мирлĕ ĕçлекен турă кайăкĕсем, уçă та сиплĕ сывлăш...*

*«Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç агентстви» уçă акционерлă обществăн Муркашри магазинĕпе хатĕрлев пунктĕнче паллашнă кăмăллă арçынсемпе утар хапхи патĕнчех тĕл пултăмăр.*

*Ĕçчен çын ală усса лараймасть. Эпир çитнĕ тĕле Владимир Аркадьевич Мишуркин утарçă та (сăн ӳкерчĕкре сулахайри) вĕллесем таврашĕнчен тухрĕ. Пĕрле ĕçлекен Петр Михайлович Ефимова хăйĕн чĕлхипе темĕн каларĕ те утарçăсем пирĕнпе калаçма хурал пӳртне кĕчĕç.*

*(Вĕçĕ 7 стр.).*

## Спорт патнех туртăнасчĕ

Паян – Физкультурник кунĕ

***Районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ пурнăçлакан ĕçĕн тĕп пайĕ – район администрацийĕпе, ял тăрăхĕсемпе тата физкультурăпа спорт организацийĕсемпе пĕрле çынсем хушшинче спорта сарасси тата вĕсене спорт мероприятийĕсем урлă сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассипе тачă çыхăнса ĕçлесси. Ăна валли районта майсем мĕнлерех-ха? Физкультурниксен кунĕпе саламласа çак ыйту çине районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалистне В.В. ПЕТРОВА хуравлама ыйтрăмăр.***

– Районта пурăнакансене физкультурăпа спорта явăçтарма майсем сахал мар. Пурĕ 26 спортзал, 7 тир, 1 йĕлтĕр базиi, «Сывлăх» ФСК тата 97 тӳрем спорт сооруженийĕсемпе площадкăсем çак ĕçе туса пыма май пураççĕ те. Кашни çулах районта спортăн тĕрлĕ енĕсемпе шкул ачисен, ĕç коллективĕсен спартакиадисем иртеççĕ.

Ĕçе пурнăçлакансем пирки калас пулсан вара малтанах тăрăшуллă та яланах хавхаланса ĕçлекен тренер-преподавательсен ĕçне палăртмалла. Вĕсем пуçаруллă пулнипе ĕнтĕ ачасемпе çамрăксем пĕчĕкрен спортпа туслашса каярах пысăк çитĕнӳсем те тăваççĕ. Çапла вара уяв умĕн С.В. Черкашин, Э.А. Гордеев, В. Т. Моисеев, С.И. Алексеев, И.В. Смирнов, В.Ф. Киселев, Р.В. Григорьев, А.В. Васильев тренер-преподавательсене ырăпа асăнни тĕрĕс пулать тесе шутлатăп.

Вĕсен воспитанникĕсем çĕр-шыв, республика шайĕсенчи ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнни, паллах, спортсменсене хăйсене кăна мар, ытти çамрăксене те хавхалантарать, малаллах талпăнма хистет. Акă А. Костина, К. Иванова, Д. Баранова, Д. Замятина, С. Васильев, Н. Скворцов, П. Охотников çамрăк спортсменсен ячĕсене спортран аякра тăманнисем пурте пĕлеççĕ темелле. Вĕсем вара Вера Соколова, Нина Охотникова, Петрпа Василий Трофимовсем пек пысăк çитĕнӳсем тăвас тĕллевлĕ.

– Спортпа физкультурăра та яланах укçа-тенкĕ ыйтăвĕ мала тухса тăрать. Ăмăртусем ирттерме, вĕсене тухса çӳреме пулăшакансем пулсан çеç кăшт çăмăлрах сывласа илме пулать-çке-ха.

– Ку çаплах. Пирĕн район территорийĕнче спорта аталантарассине профессионалсем кăна мар, ыттисем те хутшăнмасăр тăмаççĕ. Ăмăртусем ирттерме пулăшакансем хушшинче тĕрлĕ предприяти-организацисен ертӳçисем: Н.Г. Ванеркин («Муркашри чăхчĕп фабрики»), В.Н. Семенов («Моргаушская» МСО), Б.В. Андреев (Муркашри райпо), В.И. Вязов («Росгосстрах» уйрăмĕ), И.В. Николаев (Ильич яч. хис. хуçалăх), В.К. Ананьев («Свобода» хуçалăх).

Вĕсемсĕр пуçне тата вырăнти пуçаруçăсем пурри ялсенче спорта аталантарасси çинче пысăк витĕм кӳрет. В. Михайлов (Юнкă ял тăрăхĕ), Г.Лукин (Уйкас Янасал), А. Рыжков (Москакасси), А. Прокопьев (Оринин), И. Семенов (Мăн Сĕнтĕр), А. Федоров («Моргаушская» МСО) вырăнсенче спорта «туртса» пыраççĕ.

Çавăнпа та самантпа усă курса çӳлерех асăннисене пурне те тав сăмахĕ калас килет. Уяв ячĕпе саламласа вара районти пур физкультурника та, çак юхăмăн ветеранĕсене те, спортпа туслисене те çирĕп сывлăхпа телей сунатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Паян – Физкультурник кунĕ

### ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Сире Физкультурник кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çак çутă уяв пур ăру тата ӳсĕм çыннисене те пĕрлештерет. Кашни çыншăнах сывлăх чи хакли пулса тăрать. Вăл – ӳт-пӳ, ăс-хакăл çирĕплĕхĕн тата обществăн социаллă тăнăçлăхĕн тытăмĕ. Ăмăртулăх тата спорт хăюлăхпа кăмăл çирĕплĕхне, чăтăмлăхпа çĕнтерӳ патне талпăнассине, йывăрлăхсене çĕнтерсе пырассине ӳстереççĕ, палăртнă тĕллевсем патне çитме пулăшаççĕ. Çак пахалăх енĕсем пурте кашнинех шайлашуллă аталанса пыма кирлĕ.

«Утакан малаллах каять»,– тет халăх ăслăлăхĕ. Чăваш Ен темиçе хут та Раççейри тата Пĕтĕм тĕнчери сумлă ăмăртусен арени пулса тăчĕ. Пирĕн спортсменсем чи пысăк ăмăртусенче тунă çитĕнӳсемпе эпир тивĕçлипех мухтанатпăр. Куллен çине тăрса ĕçлени, пысăк пуçарулăх, сывă пурнăç йĕрки тата тăван çĕре чунтан юратни – çаксем вĕсем спортри тата пурнăçри ăнăçу никĕсĕ.

Республикăра физкультурăпа спорт комплексĕсен сетьне йĕркелес ĕç вĕçленсе пырать. Вĕсенче шывра ишмелли бассейнсем, хальхи чи çĕнĕ оборудованипе тивĕçтернĕ тренажер залĕсем пур. Çĕнĕ стадионсем, спорт тата пăр площадкисем тăваççĕ. Паян республикăра 21 спорт тата культура центрĕ ĕçлет, çулталăкĕпех ĕçлекен пăр катокĕ пур, профильлĕ вĕренӳ заведенийĕсен пурлăхпа техника базиi вĕçĕм çирĕпленсех пырать. Çуллен Чăваш Енре 2 пине яхăн массăллă спорт мероприятийĕ иртет. Вĕсене физкультурăна кăмăллакан çĕршер пин çын хутшăнать. Шанатăп, республикăмăр малашне те çак çулпа аталанса пырĕ.

Тренерсене, спорт специалисчĕсемпе ветеранĕсене тав сăмахĕ калатăп. Вĕсем хăйсен калама çук хаклă пĕлĕвне тата опытне çитĕнекен ăрăва параççĕ, çамрăксене сывлăхлă, конкуренцие тӳсĕмлĕ пулма хăнăхтараççĕ.

Малашне те ăнăçусем, пысăк çитĕнӳсем, телей тата чи ыррине кăна сунатăп.

**Н. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.**

### ХИСЕПЛĔ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕМ, СПОРТСМЕНСЕМ, СПОРТПА ТУСЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ ТАТА ФИЗКУЛЬТУРА ЮХĂМĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире Физкультурник кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Физкультурăпа спорт кашни çыннăн пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Сывлăхлă, сывă пурнăç йĕркипе пурăнакан çынсем нимĕнле йывăрлăхран та хăрамаççĕ, ĕçре ӳсĕмсем тăваççĕ, район тĕрекĕ пулса тăраççĕ. Çакна ăнланса эсир районта пурăнакансем спортпа туслă пулччăр тесе, çамрăк ăру та çакна ăша хывса ӳстĕр тесе тăрăшатăр. Хăвăрăн ăсталăхăра тĕпе хурса çамрăксене куллен вĕрентсе спорта юратма хăнăхтарса пыни те куç умĕнчех. Пирĕн ентеш спортсменсем Раççей, Европа, тĕнче шайĕнче те палăраççĕ. Тавах сире çакăншăн.

Спорта аталантарма районта майсем те çителĕклĕ. Юлашки вăхăтра çынсем спорт енне ытларах туртăнма пуçланă туйăма эсир малашне татах та анлăрах сарăлма пулăшасса, вĕсене спорт ăмăртăвĕсене ытларах явăçтарасса шанатăп. Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, хавхаланупа ăнăçу сунатăп.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

**Уявпа çавăн пекех ЧР Физкультура, спорт тата туризм министрĕ О.Б. Елизарова саламлать.**

10 октября – выборы в органы местного самоуправления

### Сведения о стоимости размещения предвыборных агитационных материалов в Моргаушской районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» в период избирательной компании 2010 года по выборам в органы местного самоуправления Чувашской Республики:

стоимость 1 квадратного сантиметра печатной площади, резервируемой для размещения платных предвыборных агитационных материалов в Моргаушской районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ», составляет 25 рублей (со всеми налогами).

О дате проведения жеребьевки по распределению печатной площади сообщим дополнительно.

Телефон для справок: 62-1-36.

Ĕç-çи – 2010

## Тыр-пул пухса кĕртнĕ

Районти хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем вĕçленнĕ. Пĕтĕмпе 6937 гектар çинчи тыр-пула пуçтарса кĕртнĕ. Пӳлмене 7984 тонна тырă кĕнĕ. Вăтам тухăç - 11,4 центнер.

Улăм 6356 гектар çинчен 3163 тонна пуçтарса кĕртнĕ. Çĕртме сухи 259 гектар çинче тунă. Кĕрхи культурăсем акма 4467 гектар (палăртнин 81,2 проценчĕ) çĕр хатĕрленĕ.

## Вырма паттăрĕсем

Районти комисси вырмана хутшăнакан комбайнерсен августăн 6–12-мĕшĕсенчи ăмăртăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Акрос-530, Дон-1500 комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче малти вырăнсене В.А. Соловьев («Свобода», 108 т.), Д.В. Никифоров («Свобода», 98 т.), Р.В. Кузнецов (Суворов яч. хис., 85 т.), «Вектор», «Полесье», «Енисей-954 комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче В.В. Горбунов («Горбунов» ХФХ, 160т.), Р.В. Никифоров («Свобода», 40 т.) йышăннă. 3-мĕш вырăна никама та паман. Çавăн пекех ытти класс ушкăнĕсене кĕрекен комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче те çĕнтерӳçĕсене палăртман.

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – юратнă хĕрĕме, ырă кăмăллă аннене, хунямана, тăхлачăна – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Венера Витальевна РОМАНОВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна, нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕ, тăхлачипе хăти, çывăх тăванĕсем.**

Юратнă аннене, аппана – Ятман ялĕнче пурăнакан **Зоя Харитоновна ГОРОХОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ырă сывлăхлă пулма чунтан телей сунатпăр. Сана çирĕп сывлăх, тулли телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Салампа: ывăлĕ, кинĕ, йăмăкĕ, шăллĕ тата вĕсен ачисем.**

Муркашра пурăнакан хаклă та юратнă çыннăмăра – **Венера Витальевна РОМАНОВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн мĕн пур ăшă туйăмпа саламлатпăр.

Сывлăху сан пултăр çирĕп,
кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр.
Утас çулу сан пултăр такăр,
Ăна çутаттăр сар хĕвел.
Сан çумăнта тус-йыш çеç пултăр,
Вăл пуринчен те кирлĕрех.

**Саламлаканĕсем: Скворцовсен, Евстафьевсен, Минаевсен çемйисем.**

# Хуҫалăх ĕҫĕсенче хастар

**Тăрăшуллисем**

***Ҫак вăхăта «Ударник» пĕрлешӳллĕ хуҫалăхра вырма ĕҫĕсем вĕҫленнĕ ĕнтĕ. Тĕш тырăпа пăрса йышши культурăсене мĕн пур лаптăк ҫинче вырса ҫапса пĕтернĕ. Тухăҫ та кăҫалхи ҫулшăн япăх темелле мар. Вăл гектар пуҫне 20 центнера яхăн ларать.***

***Кĕрхи ĕҫ ҫи вара вăл тĕш тырă культурисене пухса илесси кăна мар. Пур ĕҫе те кунта комплекслă, хăйĕн йĕркипе туса пыни кирлĕ: тырă вырассине те, улăма пухса тирпейлессине те, ҫĕртме сухине тăвассине те, кĕр аки валли ҫĕр хатĕрлесе ака ĕҫĕсене ирттерессине те.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Изосим Николаевич Васильев – Вăрманкасси уйрăмĕн механизаторĕ. Кăҫал вăл улăма рулонсене прессласси хăйне лайăх енчен кăтартса парать, хуҫалăхри ытти ĕҫсенче те тăрăшуллă.***

**В. ШАПОШНИКОВ** *сăн ӳкерчĕкĕ.*



# Суд алăкĕсене яри уҫса хунă

**Уҫҫăнлăхшăн**

2010 ҫулхи июлĕн 1-мĕшĕнче 2008 ҫулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă 262-ФЗ № «Об обеспечении доступа к информации о деятельности судов Российской Федерации» Федераллă саккун саккунлă вăя кĕчĕ. Ҫакă вăл судсен ĕҫнехĕлне май пур таран уҫҫăнрах, халăха пĕлмелле тăвассипе ҫыхăннă.

Федераллă саккунăн тĕп задачисенчен пĕри вăл – саккунлă кирек епле майпа та гражданина ирĕклĕнех кирлĕ информацие шырама, илме, теприне пĕлтерме, сарма майсем туса парасси. Федераллă саккун суд ĕҫĕхĕлĕпе паллашма 6 мел ҫирĕплетет. Вăл шутра уҫă суд ларăвĕсене хутшăнасси, суд ĕҫĕ-хĕлĕ пирки информацие массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлесси, Интернет сетĕнче вырнаҫтарасси, информацие суд ҫуртĕнче вырнаҫтарасси, архив фончĕсенчи информаципе паллаштарасси, тĕрлĕ ыйтусем пулсан информаципе тивĕҫтересси.

Паян граждансен суд пирки кирлĕ информацие илме пур майсем те ҫителĕклĕ. Сăмахран, Интернет сетĕнче Муркаш район сучĕн хăйĕн сайчĕ пур. Унта саккунпа юраманнисемсĕр пуҫне пур информацие те вырнаҫтарнă. Кусем вĕсем суд историйĕ, ҫыхăнмаллин информацийĕ, суд подразделенийĕсем, унăн полномочийĕсем, транспорт ҫӳремелли расписани, судăн ĕҫ режимĕ, суд составĕ, справка информацийĕпе патшалăх пошлинине тӳлессин йĕрки, граждансен ыйтса пĕлмелли телефон номерĕсем т. ыт. те.

Саккун требованийĕпе килĕшӳллĕн Муркаш район сучĕн сайтĕнче суд йышăннă актсен пур тексчĕсене те (юраманнисемсĕр пуҫне) вырнаҫтараҫҫĕ. Суд процесĕн участникĕсен хăрушсăрлăхне тивĕҫтерес тĕллевпе вара ĕҫе пăхса тухнă судьясен, прокурора адвокатсен хушамачĕсемпе инициалĕсене кăтартнисĕр пуҫне ыттисенне кăтартмаҫҫĕ. Харпăр хăйĕн даннăйĕсем вырăнне инициалсемпе е псевдонимсемпе усă кураҫҫĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн вăрттăнлăхра упрамалла пулсан, суд акчĕсен тексчĕсен уйрăм пайĕсене те сайта вырнаҫтармаҫҫĕ. Кун пек чарусем патшалăх хăрушсăрлăхĕпе, ачана усрава илнипе, ҫул ҫитмен ҫамрăксен интересĕсемпе ҫыхăннисем т. ыт. тĕлĕшпе те пур.

Куллен ĕҫ вăхăчĕ чухне суд аппарачĕн хушупа ҫирĕплетнĕ ĕҫченĕсем графикпа килĕшӳллĕн граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнаҫҫĕ. Судлашас пирки мĕнле документсем хатĕрлемеллин тĕслĕхĕсене суда кĕнĕ ҫĕрте стенд ҫине вырнаҫтарнă. Суд приемнăйĕ ĕҫлет. Унта суда пыракансенчен документсене йышăнаҫҫĕ. Кунсăр пуҫне судра электронлă почта ĕҫлет: morg_sud@sbx.ru. Суда пынă пур документа та, вăл шутра электронлă почтăпа ярса панисене те, ятарлă журналта учета илеҫҫĕ, кайран вĕсене пăхса тухма судьясене параҫҫĕ. Муркаш район сучĕн ĕҫĕ-хĕлĕ пирки эсир ҫак сайтра паллашма пултаратăр: http//morgaushsky.chv.sudrf.ru.

Ҫапла вара 2008 ҫулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă саккун судсен ĕҫĕн уҫҫăнлăхĕн шайне пуларăмаллах ӳстерет, обществăн право тĕлĕшĕнчи культурине хăпартать.

**Э. ТАРАСОВА,**
**Муркаш район сучĕн председателĕ.**

**«Ҫĕрĕпе ĕҫеҫҫĕ, кунĕпе ҫывăраҫҫĕ» (55 №)**

# Ҫиччĕ виҫсе пĕрре касмалла

Ҫакăн пек каларăш пур: «Мĕн акатăн ҫавă шăтать». Ахальтен аса илмерĕм эпĕ ăна. Нумаях пулмасть район хаҫатĕнче ҫамрăксем пирки ҫынсем мĕн шухăшланине, вĕсен пурнăҫ йĕрки пирки вуларăм.

Чăнах та ĕнтĕ 10–20 ҫул каяллахипе танлаштарсан ҫамрăксем питĕ улшăнчĕҫ. Паллă ĕнтĕ, ырă еннелле мар. Мĕнрен килет-ха вара ку?

Чи пĕрремĕшĕ, ман шутпа, ача мĕнле ҫемьере кун курса ӳссе ҫитĕнни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Общество та халĕ «чирлĕ» тесе каласан йăнăш пулас ҫук тетĕп. Ҫамрăксене пĕрлештерсе тăракан тĕрлĕ организацисем хут ҫинче ячĕшĕн кăна. Ĕҫлекенĕсем те унчченхи пек тулли хăватпа ĕҫлемеҫҫĕ. Радио, телевидени те хăйне май тӳнтер витĕм кӳни куҫкĕрет. Паянхи кинофильмсен геройĕсем йăлтах «чăнкă» ĕҫсемпе палăрса тăраҫҫĕ. Ҫамрăксен чунĕсене ырă мар вăрлăх акаҫҫĕ кунсерен сенкер экрансем ҫинчен.

Ĕҫсĕрлĕх те хăйĕн витĕмне кӳрет. Вĕренсе тухсан илнĕ профессипе ĕҫ тупассипе йывăрлăхсем тухса тăраҫҫĕ.

Вара ҫӳлте асăннă ҫак сăлтавсемпе пулăмсем ҫамрăксене чылай чухне "тарăн ҫырмана" сĕтĕрме пуҫлаҫҫĕ. Унта ҫакланма йывăр мар, анчах та кайран чылайăшĕ каялла тухаймасть.

Ҫавăнпа та ку ыйтăвăн ҫивĕчлĕхне ҫĕр-шыв шайĕнчех шута илмесĕр те май ҫук. Ҫамрăксем пирки ҫĕнĕ саккунсем те йышăнмалла пулĕ. Ҫиччĕ виҫсе пĕрре касас пулать. Вĕсем вăя кĕрсен вара улшăнусем те пулаҫҫех.

**Игорь МАЙКОВ.**
**Кашмаш ялĕ.**

# Йĕрке тăвасси хамăртан килет

Эпĕ ҫамрăк ҫын мар ĕнтĕ, пурнăҫ тути-масине сахал мар курнă, тӳссе ирттернĕ. Хам пирки калас пулсан ҫултаlăка яхăн ĕнтĕ эрех тенине ăша пачах ямастăп. Паянхи ҫамрăксене курсан вара чăнах та чун ыратать. Ниҫта та ĕҫлеме шутламаҫҫĕ, ытларахăшĕ ашшĕ-амăшĕн укҫи-тенкипе е пенсийĕпе тăранса, ĕҫсе-ҫисе пурăнать. Ҫитменнине ялсенче хĕрарăмсем те ĕҫке ярăнма пуҫларĕҫ. Арҫынсем пирки сăмах та ҫук.

Нискасси ялнех илер. Магазинран тытăнса пушар деповĕ патне ҫитиччен ҫул хĕррипе мĕн кăна йăваланса выртмасть-ши? Кĕленчисене пухас пулсан автомашинăн ҫур кузовĕ те пулать пулĕ. Мĕнле вара йĕркеллĕрех пулма май ҫук-ха. Ҫавăн пек вараламалла-и тавралăха?

Хам Германире службăра пулнă ҫулсене аса илетĕп. Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп: хăть ĕненĕр, хăть ан ĕненĕр, анчах та эпĕ унта ӳсĕр пĕр ҫынна та курман. Нимĕҫсем ĕҫес пулсан та пирĕн пек тирĕнсе вăркăнса кайиччен хыпса лартмаҫҫĕ. Пирĕн вара ҫăвартан курăниччененех тултарса лартмалла.

Пуш кĕленчесем ăҫта килчĕ унта йăваланса выртни пирки ҫавна каласшăн. Мĕншĕн-ха ăна магазинсенче пур ҫĕрте те йĕркеллĕ йышăнассине йĕркелемелле мар? «Е йĕркеллĕ тасатман, е пушă ещĕк ҫук» магазинсенче яланах. Германире пулсан вара пушă кĕленче ҫумра ҫук пулсан магазина эрех патне ан та кай. Унта пушшине памасăр туллине илеймĕн.

Патшалăх шайĕнче тивĕҫлĕ саккунсем йышăнмасăр та ку тĕлĕшпе йĕрке тума йывăр пулĕ. Вĕсене йышăнни сахал, вĕсем мĕнле пурнăҫланнине те ҫирĕп тĕрĕслесе тăни кирлĕ.

Пĕр-икĕ сăмах район центрĕ пирки. Муркаш вăл – пĕтĕм район тĕкĕрĕ. Апла пулсан район центрĕнче те пулин ку тĕлĕшпе тивĕҫлĕ йĕрке тумаллах. Ҫак ĕҫшĕн ответлă органсем хăйсен тивĕҫне чыслăн пурнăҫлачччăр. Йĕркелĕх хамăршăнах вĕт-ха.

**Автор ыйтнипе унăн хушаматне кăтартман.**

**Пенси ыйтăвĕсемпе**

# Икĕ пенси илме пултарĕҫ

***Призывпа ҫар ретне кайсан вилнĕ ҫар ҫыннисен ҫемйисен халĕ тĕрлĕ ведомствăсенчен икĕ пенси илме право пур. Кун пирки калакан 2010 ҫулхи июнĕн 21-мĕшĕнче йышăннă 122-ФЗ № Федераллă саккун 2010 ҫулхи июлĕн 4-мĕшĕнче вăя кĕчĕ.***

Ҫĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн пĕр харăсах икĕ пенси – Пенси фончĕ ҫемьере тăрантаракана ҫухатнипе паракан пенсие тата ĕҫленĕ ҫулсемшĕн (инвалида тухнине пула) силовой ведомство паракан пенсие ҫак категорисене кĕрекен ҫынсен илме право пур:

– ҫар ҫыннисен ашшĕ-амăшĕ, енчен те ачине призывпа ҫар ретне илсен вилнĕ е ҫар ретĕнче пулнă чухне суранланнине пула ҫартан таврăнсан вилнĕ пулсан;

– ҫар ҫыннисен хут уйăрттарман мăшăрĕсем, енчен те ҫар ҫынни службăра пулнă чухне суранланса вилнĕ пулсан.

Кунта ҫакна палăртса хăвармалла. Пенси фончĕ ҫемьере тăрантаракан вилнине пула паракан пенсие «Раҫҫей Федерацийĕнче патшалăх пенсийĕпе тивĕҫтерессин ҫинчен» Федераллă саккунăн 15-мĕш статйипе килĕшӳллĕн заявлени ҫырса панă, ытти кирлĕ документсене тăратнă уйăхăн 1-мĕш числинчен тытăнса тӳлесе тăма пуҫлать.

Унччен вара службăра чухне вилнĕ ҫар ҫыннисен ашшĕ-амăшĕ тата мăшăрĕсем пĕр вăхăтрах икĕ пенси пĕр ведомствăра кăна – Пенси фондĕнче илме пултарнă.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ.**

**Саккун пуриншĕн те**

# Административлă штраф е административлă арест?

***Хальхи вăхăтра административлă майпа правăна пăснăшăн хунă налуксене шыраса илесси актуаллă ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Чылайăшĕ штрафсене вăхăтра тӳлеме тăрăшмасть е пачах та тӳлеме шутламасть. Ҫакă, паллă ĕнтĕ, укҫа-тенкĕ ҫитсе пыманнипе те ҫыхăннă. Апла пулин те саккун пуриншĕн те пĕрре. Йĕркене пăснă пулсан штраф тӳлемех тивет. Унсăрăн суд приставĕсен Федераллă службин управленийĕн Чăваш Республики тăрăх районти пайĕн ҫирĕпрех мерăсем те йышăнма тивет.***

Штраф парăмĕсене шыраса илес тĕлĕшпе йĕрке туса хурассипе приставсен районти пайĕ кăҫал сахал мар ĕҫ туса ирттерчĕ. Сăмахран, халĕ эпир регистрацилекен тата ытти тĕрĕслев учрежденийĕсемпе организацийĕсене ыйтнисем (запроссем) яратпăр, парăмçăсен пурлăх тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвне палăртатпăр, вĕсен хăш-пĕр прависене чикĕлетпĕр. Ҫапах та чи витĕмли кунта административлă мерăсем йышăнни пулса тăрать.

Административлă штрафа тӳлесе татмалли тапхăра 30 кун тесе палăртнă. Ун пирки Раҫҫей Федерацийĕн административлă майпа правăна пăсни ҫинчен калакан кодекса ҫырса хунă. Акă штрафа вăхăтра тӳлемесен унăн суммине икĕ хут пысăклатса шыраса илме пултараҫҫĕ е айăплă ҫынна 15 талăк таран административлă майпа арестлеҫҫĕ.

Пĕрремĕш тапхăрта парăмçăна исполнительнăй производство пуҫарасси пирки йышăну туни ҫинчен постановлени ярса параҫҫĕ. Унта суд йышăнăвĕпе панă штрафа 30 кун хушшинче тӳлесе татмалли пирки каланă. Унтах суд приставĕн-исполнителĕн саккунлă требованийĕсене пурнăҫламаншăн ответлăх пирки аса илтерни те пур.

Иккĕмĕш тапхăрта суд приставĕ-исполнителĕ штрафа тӳлемелли пирки требовани тăратать. Парăмçăна административлă майпа правăна пăснăшăн административлă майпа ответ тыттарасси пирки пĕлтереҫҫĕ.

Виҫĕмĕш тапхăрта вара штрафа вăхăтра тӳлесе татман пулсан парăмçă административлă майпа правăна пăсни пирки протокол ҫырма тивет. Хыҫҫăн асăннă протокола ытти документсемпе пĕрле пăхса тухма миравай судьяна ярса параҫҫĕ. Тивĕҫлĕ йышăнăва миравай судья тăвать.

Суд практики вара ҫавна кăтартса парать. Асăннă йышши тĕслĕхсенче ытларах чухне айăпланакана административлă майпа арестлеме тивет. Пĕтĕмĕшле илсен ку вăл парăмçă пĕрремĕш хутĕнче те, иккĕмĕш хутĕнче те палăртнă штрафа тӳлесе татма пултарайманнипе ҫыхăннă.

Хальхи вăхăтра суд приставĕсен-исполнительсен производствинче ирĕксĕрлесе суд штрафĕсене шыраса илесси пирки исполнительнăй документсем 72 шутланаҫҫĕ. Ку вăл пĕтĕмпе 72 пин те 183 тенкĕлĕх. Ĕҫ «шала кĕрсе ан кайтăр» тесен штраф парăмĕсене вăхăтра парса татас пулать.

**А. БОЧКАРЕВ,**
**суд приставĕсен районти пайĕн пуҫлăхĕ, аслă суд приставĕ.**

# Кунта ĕçлеме таса кăмăл кирлĕ

Ыран – Пыл спасĕ



(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).

Алăк уçсанах кунта тирпейлĕх хуçаланни куç тĕлне пулчĕ. «Апла пулсан ку арçынсем кунта хурт-хăмăр ĕрчетме вăхăтлăх вырăн шыраман», – вĕлтлетрĕ пуçра шухăш. Утарçăсемпе калаçма пуçласан вĕсен пĕрремĕш сăмахĕсенченех манăн шухăш тӳрре тухни палăрчĕ.

– Эпĕ тракторист. Çамрăк çулсенче пыл хурчĕ мĕнне çынсем каланинчен тата çак тăрăшуллă хуртсем хамăра сăхсан çеç пĕлнĕ. Ытти чух вĕсем маншăн пулман. Пĕр 20 çул каялла утă çулнă вăхăтра манăн трактор çăвăр хуртсен (рой) чăмăркки çине пырса тухрĕ. Хамăр ялти (Анат Ирçери) утарçăна Виссарион Егорович Гаврилова çакăн пирки пĕлтертĕм те иксĕмĕр улăха тухса çăвăр хуртсен çăмхине михĕне пуçтарса ман патăма илсе кайрăмăр. Каç енне ялтан пушă вĕлле тупса килсе хуртсене унта ятăм та манăн пурнăç тĕпрен улшăнчĕ – эпĕ утарçă ĕçне кӳлĕнтĕм, – каласа парать иртнине ума кăларса Владимир Аркадьевич куçне юлташĕ çинчен илмесĕр.

Киле вĕлле хурчĕ илсе пынă тракторист çав çулах зоотехник-утарçăсене вĕрентсе квалификацие ӳстерекен Рязаньти института вĕренме кĕрет. Пурнăç ыйтнипе çĕнĕ ĕç çулĕ çине тухас тĕллевпе Володя çулталăк хушши пĕр сиктермесĕр вĕренет.

Çĕнĕ пĕлӳ çĕннинех ыйтать. Хĕлле колхозра тракториста тимленĕ каччă çу кунĕсем çитсен колхоз утарне утарçăна пулăшакан пулса ĕçлеме вырнаçать. Кунпа пĕрлех килте те хуртсем ĕрчетме пуçлать.

Вăхăт иртни сисĕнмест. 7 çул хуçалăх утарĕнче утарçăра ĕçленĕ çамрăк арçыннăн килти хушма хуçалăхĕнче те вĕллесем 30 яхăн пухăнса каяççĕ.

– Çак вăхăтра пурнăçман ума каллех ыйту кăларса тăратрĕ. Мăшăрăм пĕррехинче пӳрте кĕчĕ те вĕлле хурчĕсене пула пахчана тухса ĕçлеме кансĕррине пĕлтерчĕ, вăрманта пĕр уçланкă тупма сĕнчĕ, – çĕнĕ утар историне пуçласа сăмах хускатрĕ Володя.

Арăмĕн шухăшне çав каçах Володя шкулта пĕрле вĕреннĕ, халĕ тăван колхозра водительте ĕçлекен Петя тусне пĕлтерет: «Мĕн тумалла?»

Вăй питти арçынсем çухалса каймаççĕ. Халиччен вĕлле хуртне палламан Петр Михайлович Ефимов та юлташне йывăрлăхра пулăшас тĕллевпе пĕрле пулма килĕшет. Пĕр каварлă çын пуррипе усă курса çамрăк арçынсем вăрманçăсемпе кайса калаçаççĕ, арендăна çĕр ыйтса илеççĕ.

– Çум кăна ахăратчĕ ку тĕлте. Кĕрсе тухма начарах мартан çак тĕлте хамăра ятăн утар йĕркелеме тĕв турăмăр. Пуçланчĕ вара ĕç. Хамăр ĕçлетпĕр, ачасем пулăшаççĕ, мăшăрсем вăй парса тăраççĕ – çĕн çĕре уйрăлса тухса хамăра валли хуçалăх çавăртăмăр, – каласа парать ырă кăмăлне пытармасăр йăл кулса Петя.

Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр. Ваттисен çак сăмахне мала кăларса арçынсем таврара çук утар йĕркелесе яраççĕ. Хăйсем аллипе тунă çатан карта паян утара хăйне евĕрлĕ сăн кĕртет, утара çут çанталăкпа çывăхлатать.

Ĕçлесен пурăнма пулать. Çакна Володьăпа Петя утарçăсем хăйсен тĕслĕхĕпе çирĕплетсе параççĕ. Ĕçчен çынна кӳршĕсем çеç мар, çут çанталăкĕ те курать, хисеп тăвать, вĕлле хурчĕсем те вăй çитнĕ чухлĕ пулăшаççĕ. Сатур утарçăсене иртнĕ çулла кăна пыл хурчĕсем пĕр тонна сутмалăх пыл пуçтарса параççĕ.

– Кăçалхи шăрăхра сахалтарах пулать пулсан та, мĕн пурришĕн тавах пыл хурчĕсене. Ĕçчен тусăмăрсене эпир сироппа мар, хăйсем çу каçа хатĕрленĕ пылпах хĕл каçаратпăр. Çемье пуçне вĕллере 25 килограмм пыл хăваратпăр. Унсăр пуçне çуркунне тулли рамкăсем лартма саппас юлать, – терĕ вĕлле хуртĕнчен хăранă Петя паян утар ĕçĕнчи нумай вăрттăнлăха автомашинăри пекех пĕлнине кăтартса.

Володя хăйĕн 3 ачине, Петя 2 ачине ура çине тăратма вĕлле хурчĕсем пулăшнине паян пĕртте пытармаççĕ. Вĕсем паян кашниех пурнăç çулĕ çине тухса пыраççĕ, анчах ашшĕсен ĕçне шута хураççĕ, сивлемеççĕ. Яла таврăнсан ялан вăрманти утарта курма пулать хайхискерсене.

– Мăшăрсене тав тăватпăр. Вĕсем пире ăнланни, май пур таран пулăшса пыни – утар ĕçĕнче пысăк тĕкĕ. Паян эпир кашни пушă вăхăтрах утара васкатпăр. Кунта чун уçăлать. Пĕлетпĕр: вĕлле хурчĕ укçапа пыл парать, сывлăхпа кану çуратать, çемьере килĕшӳ йĕркелет. Çакна шута илсе вĕлле хуртне пысăк тав. Вĕсемпе çывăх тăвансем пек ĕçлекенсене вара пыл спасĕпе пысăк салам, – терĕç хăйсене кулленхи ĕçре ЧР хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç агентствин Муркашри суту-илӳпе хатĕрлев пункчĕн зоотехник-хатĕрлевçи П. Семенова нумай пулăшнине палăртса тата çавăншăн ăна тав туса ĕçрен хăраман утарçăсем.

**Анатолий БЕЛОВ.**

# «Утарта пурнăç телейне тупрăм»

Ĕç çынна илем кӳрет

Шурчари арман урамĕ чăваш ялĕсенчи пиншер урам пекех пĕр енлĕ пĕчĕк те тирпейлĕ урам. Тăван кĕтес илемлĕхĕ унта пурăнакансенчен килет. Çак урамри 4-мĕш çуртра пурăнакан Федор Васильевич Савельевпа тĕл пулса юмахласан ку тăрăхра тирпейлĕ пулма майĕ те çукки уçăмлă палăрчĕ.

– Çитес çулхи нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче 90 çул тултаратăп. Анчах паян та пыл хурчĕсемпе хутшăнма пăрахаймастăп. Вĕсем манăн çемьен пĕр пайĕ пулса тăчĕç, – терĕ манпа паллашнă хыççăн ман çул çӳрев тĕллевне пĕлсен алла чăмăртанă май Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçин ветеранĕ, ĕмĕрĕпех пыл хурчĕсемпе туслă пурăннă ĕçчен.

Ашшĕ пултаруллă хресчен пулнăран килти хушма хуçалăхра тислĕк тăвас тĕллевпе кăна 5 лаша тытнине шутласан, Федорăн пыл хурчĕсем патне çул та çук тейĕн. Анчах амăшĕ – Перасковья Яковлевна – Федьăн кукашшĕнченех вĕлле хурчĕсемпе ĕçлессине алла илнĕрен арçын ача кил таврашĕнче юман колодăсенче пыл хурчĕсене тытнине ачаранах астăвать. Кайран, 1934-1935 çулсенче, ку ĕç вĕллесене куçать.

– Тавах аннене. Унăн тăрăшулăхĕпе çав çулсенчен пуçласа пирĕн кил хуçалăхран вĕлле татăлман. Анне вăрçă çулĕсенче вĕлле хурчĕсене пăрахман. 1946 çулхи çуркунне эпĕ салтакран таврăнсан лайăх астăватăп, анне ман куç умĕнче пахчана 6 вĕлле кăларса лартрĕ, – аса илет паян ветеран.

Амăшĕн сывлăхĕ хавшасан вăл утар ĕçне ывăлне Федора шанса парать. Унтанпа 64 çул иртрĕ ĕнтĕ, анчах çак тапхăрта Ф. Савельев хуçалăхĕнче вĕлле хурчĕ пулманни пулман. 1946 çулта авланнă арçын 1953 çулта уйрăлса тухнă чух та пĕрле 3 вĕлле илет. Çавăнтанпа вăрçăченех учителе вĕренсе тухнă арçын шкулта ачасене вĕрентнипе пĕрлех пĕрре те вĕлле хурчĕсенчен уйрăлман. Уйрăлма кăна мар, ял çыннисене те вĕллесем тытма сахал мар пулăшнă. Çак хушăра вĕлле тытас ĕçе чунĕпе парăннă ветеран хурт-хăмăр пирки вуланă усăллă сĕнӳсене ятарлă тетраде çырса пынă. Ку çыру




ĕçĕпе ял çыннисем паян та паллашма хирĕç мар.

– 2008 çулта хамăн утарта çемье пуçне 30 килограмм пыл илни маншăн хăйне евĕр ӳсĕм пулчĕ. Уйрăм вĕллесенчен 50 килограмм е ытларах та илни вара пĕрре пулнă пулăм мар, – терĕ утара тухнă май Федор Васильевич Савельев ветеран-утарçă.

Пыл хурчĕ çамрăк ĕмĕре тăсма пулăшни, сывлăха сыхлани, ĕмĕре туллирех туни, пурнăçа тулли илем кӳни ветеранăн кашни сăмахĕнчех. Чăнах юратать иккен çут çанталăка тата вĕлле хурчĕсене 90 çул тултаракан ĕнерхи салтак.

**А. ПЕТРОВ.**

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансене пĕлме

# Шăрăх çанталăк тата выльăх-чĕрлĕх

Ĕнесем пăхас ĕçре вĕсене çуллахи вăхăтра улăх-çаранта çӳретесси – пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Çак технологие çирĕп пăхăнсан ĕнесен продуктивлăхĕ те, вĕсен сывлăхĕ те, пăруласси те лайăхланать. Кунта тулашри çут çанталăк условийĕсем те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çанталăк условийĕсем тенĕрен малтанах сывлăш пахалăхне тата нӳрĕклĕхне, çутăпа сывлăш температурине шута илмелле.

Выльăх организмĕшĕн сивĕ те, шăрăх та усăллах мар. Сывлăшăн пысăк температура продуктивлăха тата ĕçлеслĕхе чакарать, ывăнтарать, тарлаттарать т. ыт. те. Шăрăх çанталăкра выльăхсене хăвăрт хăвалани, лашасене йывăр ĕçлеттерни вĕсене ăшăпа аптăратма пултарать. Кун пекки выльăх-чĕрлĕхе вилесси патне те илсе çитерме пултарать.

Сывлăш температурин гигиена пĕлтерĕшĕ тăван тавралăхпа чĕрĕ организм хушшинчи ăшă ылмашăвне йĕркелессипе çыхăннă.

Ял хуçалăх выльăхĕсен тĕрлĕ тĕсĕсен кĕлетке температури яланах 36-42 градус. Выльăхсем сывлăш температурин тĕрлĕ виçисене тĕрлĕрен хăнăхаççĕ. Пысăк температурăна лайăхрах хăнăхаканнисем – лашасем, начартарах – сурăхсем. Вăтаммисен шутĕнче мăйракаллă шултра выльăхсемпе сыснасем. Шăрăх çанталăка мăнтăрах мар, ӳт-тир çинче çăм сахал, çутăрах тĕслĕ выльăхсем лайăхрах чăтса ирттереççĕ. Мăнтăррисем тата çăмлă та хура тĕслисем – йывăррăн.

Сывлăш температури хăвăрт улшăнни выльăхсене шăнса чирлесси патне илсе çитерет. Вăтам улшăнусем – выльăхсемшĕн чи меллисем.

Выльăхсем сивĕ температурăна шăрăхран лайăхрах тӳсĕмлĕ.

Шăрăх çанталăкра выльăхсем нумай тарлани организма кирлĕ тăварсемпе витаминсем çухатасси патне илсе çитерет. Паянхи шăрăх кунсенче чĕр чунсем тарласа 58 процент таран шыв çухатаççĕ. Ĕнене пĕр литр сĕт хатĕрлесе çитерме 4-5 литр шыв кирлĕ. Çав вăхăтрах выльăх талăксерен 30 литр таран шыв сывласа кăларса ярать. Енчен те ĕнесем 15-20 процент сахалрах шыв ĕçеççĕ пулсан, вĕсем патне шыв ĕçме хушма савăтсем лартса памалла. Шыв ĕçмелли вырăнсем кĕтӳ çӳренĕ вырăнсенчен катара пулмалла мар. Енчен те çывăхра çырма е пĕве пулмасан шыва транспортпа турттарса килессине йĕркелемелле.

Сыснасене илсен, вĕсене çуллахи вăхăтра уçăлтарса çӳрени вырăнлă. Хĕвел питтинче сыснасене ăшă ан çаптăр тесен уçăлтарма кăлармалли вырăнсене ӳплесем айне тумалла. Унта вара шыв ĕçме кормушкăсем тытмалла. Сыснасем шывра йăваланни – вĕсемшĕн шăрăх çанталăкри «парне».

Выльăх организмĕнчи каялла тавăрмалла мар процесс кĕлетке температури 43-44 градуса çитсен, кайăк-кĕшĕксен 47 градуса çитсен пуçланать.

Кăçалхи çу кунĕсем ниxăçанхинчен те шăрăхрах тăнине кура выльăхсем ăшăпа е хĕвел çутипе аптăраса ӳкес хăрушлăх пур. Çавăнпа та çак тапхăрта вĕсене пăхма меллĕ условисем туса парасси – выльăх пăхакансен пĕрремĕш тĕллевĕ.

Выльăхсем ăшăпа ан тăраса ан кайччăр тесен:

– выльăхсем тăракан пӳлĕмсенче сывлăш температурине чакарма мелсем шырамалла;

– сарайсемпе витесенче сывлăш куçассин хăвăртлăхне пысăклатмалла;

– выльăхсем пĕр çĕре пухăнса тăрассинчен асăрханмалла, шăвармалла е сивĕ шывпа пĕрĕхмелле;

– рациона витаминсемпе пуян апат хушмалла;

– шăрăх вăхăтра ĕçлекен лашасене 11-15 сехетсем тĕлĕнче кантармалла;

– кĕтӳсене ирпе-каçпа çӳрессине йĕркелемелле;

– кăнтăр кунĕсенче выльăхсене сулхăнра е вентиляци лайăх ĕçлекен пӳлĕмсенче тытмалла;

– выльăхсене тăтăш ĕçмелли таса шывпа тивĕçтермелле.

Халĕ асăннă сĕнӳсене пăхăнакансем кăна çирĕп малашлăха шанма пултараççĕ.

**Л. БОЯРИНОВА,**
**районти ветеринари лабораторийĕн ертӳçи.**

Килти хушма хуçалăх

# Груша татса упрасси

**Груша тутине епле сыхласа хăвармалла?**

**И. СИДОРОВА.**

Çакăн вăрттăнлăхĕ опытлă пахчаçăсемшĕн паллă ĕнтĕ, анчах тинтерех пахча ĕçне кӳлĕнекенсемшĕн кунта вĕренмелли чылай.

Ыйту хуравĕ çакăнта: нумай пахчаçă груша çимĕçне йывăç çинчех пиçтерсе çитересшĕн. Çакна вара тума юрамасть. Грушăн лайăх тути ăна вăхăтра татсан – çурма пиçсе çитсен – кăна нормăна кĕрсе çитет.

Йывăç çинче пиçсе çитнĕ грушăсен тути крахмал майлă пулса каять. Пиçсе иртсе кайни çинчен грушăсем саралсах кайни калать. Грушăсене хăçан татмалли пирки тĕп тĕрĕс калама çук. Вăл çут çанталăк условийĕсене пула улшăнать. Йывăçăн кăнтăр енче вырнаçнă çимĕçĕсен малтанхи партийĕ саралма пуçласанах пĕтĕм тухăçа татса пуçтарса кĕртмелле. Çакăн пек тунă çимĕçсен малтанах темиçе кун сулхăн пӳлĕмре пиçсе çитмелле. Кун пек çимĕçсем вăхăт иртсен сĕткенлĕ пулса çитеççĕ.

**А. САВЕЛЬЕВ, пахчаçă.**

